Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

75 (7929) № ✻ Юн кун, 2011 ҫулхи авӑн (сентябрь) уйӑхӗн 28-мӗшӗ ✻ Хакӗ ирӗклӗ

## «Иккӗмӗш ҫӑкӑр» хирте юлмӗ

Ҫӗр улми пуссисенче



*Е. Якимов – ҫӗр улми турттаракан водительсенчен пӗри.*

«Иккӗмӗш ҫӑкӑра» пысӑк лаптӑксем ҫинче лартса ӳстернисен шутӗнче «Свобода» хуҫалӑх та. Кашмашсемпе Ҫатракассисем кӑҫал 150 гектар ҫинче ҫӗр улми ӳстерчӗҫ. Паян ӑна пуҫтарса кӗртессипе хуҫалӑх пӗтӗм вӑйне мобилизацилет. Уй-хир бригадисенче ӗҫлекенсемпе, механизатор-водительсемпе пӗрле ял ҫыннисене пулӑшма килнисем те, хуҫалӑхӑн бухгалтери ӗҫченӗсем те паян пӗр тӗллевпе ӗҫлеҫҫӗ. Ҫумӑрлӑ кунсем хушшинчи кашни кӗске уяр вӑхӑтах вӗсем ҫӗр улми пуссинче ирттереҫҫӗ.

Эпӗ Вӑрӑм ӗшне уйне ҫитнӗ ҫӗре кӑнтӑр апатне кайнисем таврӑнма ӗлкӗрчӗҫ.

– Паян (авӑн уйӑхӗн 26-мӗшӗ. – Авт.) кӑшт уяртарах та кану вӑхӑтне чакартӑмӑр. Йӗпе-сапари кашни минут хаклӑ. Ҫакӑн пек самантсенче ҫӗр улми ытларах кӑларас тесе тимлетпӗр, – терӗҫ ҫӗр улми кӑларакан «Палессе» комбайна вырӑнтан тапратнӑ май Сергей Харитонов механизаторпа ӑна пулӑшакан Максим Максимов.

Ҫак вӑхӑтра Кашмаш каччисемпе пӗрле вӗсене пулӑшма Йӳҫкасси ял тӑрӑхӗнчен килнӗ А. Тимофеевпа И. Никитин механизаторсем те хӑйсен комбайнӗсене хускатрӗҫ.



*С. Харитонов «Палессе» комбайнпа ҫӗр улми кӑларать.*



*Вӗсем ҫӗр улмине хиртен пусӑсене кӗртессипе тимлеҫҫӗ.*

Ҫӗр улми кӑларакан комбайнсем ҫинче вӑй хуракан В. Замятинпа В. Иванов, А. Смирновӑпа Т. Чабышева та агрегатсем патнелле утрӗҫ.

– Эпир ӗҫлетпӗр-ха. Ҫанталӑкӗ уяр кунсем патӑрччӗ, – терӗ В. Замятин ӗҫчен.

Комбайнсем ӗҫленӗ ҫӗр улми пуссин тепӗр вӗҫӗнче А. Матвеев, М. Димитриев, А. Кобец механизаторсем копалкӑсемпе ҫӗр улми кӑлараҫҫӗ. Уй-хир бригадинче вӑй хуракансем тата вӗсене пулӑшакансем кӑларнӑ ҫӗр улмие ҫийӗнчех михӗсене тултараҫҫӗ.

Кӑларнӑ ҫӗр улмине пусӑсене турттарса тӑрассипе С. Алжиров, В. Степанов, Е. Якимов, С. Данилов, Н. Давыдов водительсем тимлеҫҫӗ.

**А. БЕЛОВ**
**сӑн ӳкерчӗкӗсем.**

Парти съезчӗ

## Малашлӑх ҫул-йӗрӗ паллӑ

«Пӗрлӗхлӗ Раҫҫей» партин Мускаври авӑнӑн 23–24-мӗшӗсенче иртнӗ съезчӗ халӑха тахҫанах хумхантаракан-каласӑтаракан икӗ ыйтӑва туллин уҫӑмлатнӑ – парти кам ертсе пынипе раштавӑн 4-мӗшӗнчи Патшалӑх Думин суйлавне хутшӑнӗ тата ҫитес ҫулхи пуш уйӑхӗнчи ҫӗршыв Президенчӗн суйлавӗнче влаҫ кандидачӗ кам пулӗ.

Съездӑн иккӗмӗш кунӗнче пӗтӗмпех хӑйӗн вырӑнне ларчӗ: суйлав списокӗн пӗрремӗш йӗркинче – Дмитрий Медведев. Малашлӑхра Раҫҫей Правительствине ертсе пырас туртӑмпа. Паллах, Президент суйлавӗ хыҫҫӑн. Президент должноҫне йышӑнма вара «Пӗрлӗхлӗ Раҫҫей» парти съезчӗ Владимир Путин кандидатурине сӗнчӗ.

Район уй-хирӗсенче

## Ҫанталӑка парӑнмасӑр

Районти ял хуҫалӑх производство кооперативӗсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче паян пӗтӗм ӗҫ вӑйне «иккӗмӗш ҫӑкӑр» кӑларса пухса кӗртес ӗҫе явӑҫтараҫҫӗ. Мӗн лартса ӳстерни – пирӗн! Ҫак йыхрав-чӗнӳпе хуҫалӑх ӗҫченӗсем кулленех ҫӗр улми пуссисене тухаҫҫӗ. Нумай ҫӗрте алӑ ӗҫне техника пулӑшӑвӗпе ылмаштарни хресчен ӗҫне ҫӑмӑллатни патне илсе пырать. Апла пулсан та йӗпе-сапаллӑ ҫанталӑкра ҫӗр улмине ҫухатусӑр пуҫтарса илесси паян пысӑк ыйтуллӑ.

Ял хуҫалӑх производство кооперативӗсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхӗсенче кӑҫал «иккӗмӗш ҫӑкӑр» пӗтӗмпе 1285 гектар йышӑнать. Ӗнерхи куна районӗпе ӑна 410 гектар (32 процент) кӑларнӑ. Вӑтам тухӑҫ 130 центнера яхӑн. Ҫӗр улми кӑларас ӗҫсем «Восток», Ильич ячӗ. хис., «Оринино» хуҫалӑхсемпе «ДаАн» ячӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑра хальлӗхе ӑнӑҫлӑрах пыраҫҫӗ.

Ӗҫрен ан хӑра – вӑл хӑй санран хӑратӑр. Ҫак девиз кашни хуҫалӑх ӗҫченӗшӗн паян ҫывӑх та пӗлтерӗшлӗ.

**Хамӑр инф.**

Йышӑну

## Ӑшӑ ҫитрӗ

Сентябрӗн 23-мӗшӗнче район администрацийӗн пуҫлӑхӗ 482 № йышӑну тунӑ. Йышӑну хутса ӑшӑтмалли сезона пуҫӑнассипе ҫыхӑннӑ. Ҫапла вара юлашки вӑхӑтра ҫанталӑк сулхӑн тӑнӑ май шкул ҫулне ҫитмен ача-пӑча учрежденийӗсене, пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӗренӳ учрежденийӗсене, сывлӑх сыхлавӗн муниципаллӑ учрежденийӗсене сентябрӗн 26-мӗшӗнчен тытӑнса хутса ӑшӑтма пуҫӑнма ирӗк панӑ.

**Хамӑр инф.**

Выборы

### Условия размещения предвыборных агитационных материалов в Моргаушской районной газете «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» в период избирательной кампании с 5 ноября по 2 декабря 2011 года

1. Для размещения предвыборных агитационных материалов региональных отделений Всероссийских политических партий, участвующих на выборах депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Российской Федерации шестого созыва 4 декабря 2011 года, на бесплатной основе резервируется печатная площадь не менее 10% от общего объема еженедельной печатной площади газеты «Ҫӗнтерӳ ялавӗ».

На платной основе печатная площадь предоставляется в размере 20% от общего объема еженедельной печатной площади газеты.

2. Для размещения предвыборных агитационных материалов, предоставляемых зарегистрированными кандидатами и региональными отделениями политических партий, зарегистрировавшими списки кандидатов, в период проведения предвыборной агитации по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики пятого созыва с 5 ноября по 2 декабря 2011 года на бесплатной основе резервируется печатная площадь не менее 15% от общего объема еженедельной печатной площади газеты «Ҫӗнтерӳ ялавӗ».

На платной основе печатная площадь предоставляется в размере 30% от общего объема еженедельной печатной площади газеты.

Также на бесплатной и платной основе печатная площадь предоставляется кандидатам, участвующим на дополнительных выборах в органы местного самоуправления.

Стоимость 1 кв. см. печатной площади, резервируемой для целей предвыборной агитации на платной основе, 35 рублей.

О дате проведения жеребьевки по распределению печатной площади в газете «Ҫӗнтерӳ ялавӗ» будет сообщено дополнительно.

Ҫитӗнӳ

## Раҫҫейре – виҫҫӗмӗш

Сентябрӗн 17-мӗшӗнче Мускав облаҫӗнчи Вороново поселокӗнче Раҫҫейри хӑвӑрт утакансен кубокӗ иртнӗ. Пирӗн республика командинче районти ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗн В.Т. Моисеев аслӑ тренерӑн воспитанникӗ Дина Замятина та ӑмӑртнӑ. Юниоркӑсен ӳсӗмӗнче 10 ҫухрӑмлӑ дистанцире вӑл виҫҫӗмӗш вырӑна тухнӑ. Пӗтӗмӗшле вара Чӑваш енӗн команди пӗр «ылтӑн», пӗр «кӗмӗл» тата виҫӗ «пӑхӑр» ҫӗнсе илнӗ.

Инкек

## Тӑхӑр ҫыннӑн пурнӑҫӗ татӑлнӑ

Иртнӗ вырсарни кун Ҫӗрпӳ районӗнчи Чиричкасси ялӗ ҫывӑхӗнче Энӗш юхан шывӗ урлӑ хывнӑ кӗпер ҫинче инкек пулнӑ. «Фольксваген-Транспортер» микроавтобуспа фура ҫапӑннӑ. Микроавтобус ҫинчи тӑхӑр ҫыннӑн пурнӑҫӗ вӑхӑтсӑр татӑлнӑ. Вӗсенчен виҫҫӗшӗ – Уйкас Хачӑк ялӗнчен.

Авари пирки уголовлӑ ӗҫ пуҫарнӑ. Следстви пырать.

**Хамӑр инф.**

Ҫырӑнтару – 2012

### ХАКЛӐ ВУЛАКАНСЕМ!

**«Ҫӗнтерӳ ялавӗ» хаҫата 2012 ҫулхи январь уйӑхӗнчен илсе тӑма унчченхи хакпах ҫырӑнтараҫҫӗ.**

**Ултӑ уйӑха ҫырӑнмалли хак: 191 тенкӗ те 70 пус.**

**Хаҫат редакцийӗ.**

Саламлатпӑр



Юратнӑ мӑшӑра, хаклӑ аннене, кукамая, асаннене, хисеплӗ хунямана – Москакасси ялӗнче пурӑнакан **Тамара Григорьевна ЯКОВЛЕВӐНА** юбилей ячӗпе ӑшшӑн саламлатпӑр. Яланах сывлӑхлӑ, ӑшӑ кӑмӑллӑ пул, кӗрекӳ ҫӑкӑр-тӑвартан ан татӑлтӑр.

Анне сана тав туса
Саламлатпӑр пур йышпа.
Пурӑн ҫӗр ҫул савӑнса,
Пурнӑҫ илемне туйса.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, хӗрӗсемпе кӗрӳшӗсем, ывӑлӗпе кинӗ, мӑнукӗсем.**



Хаклӑран та хаклӑ юратнӑ аннене, хунямана, аппана, йӑмӑка, ҫывӑх тӑвана – Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗнчи Шупуҫ ялӗнче пурӑнакан, сентябрӗн 27-мӗшӗнче 70 ҫул тултарнӑ **Тамара Федоровна ЕЖУКОВӐНА** чун-чӗререн ырӑ та чи ӑшӑ сӑмахсемпе саламлатпӑр. Эсӗ пурри пирӗншӗн питӗ пысӑк телей. Тавах сана ырӑ кӑмӑлушӑн, чун ӑшшине пире парнеленӗшӗн. Эпир сана юрататпӑр.Сывлӑху сан ҫирӗп пултӑр, кун-ҫул вӑрӑм та телейлӗ килтӗр. Ачусемпе, мӑнукусемпе тата мӗн пур тӑванпа пӗрле савӑнса пурӑнмалла пултӑр. Кӗрекӳ ҫӑкӑр-тӑвартан нихӑҫан та ан татӑлтӑр, тӑванусенчен пуян пултӑр. Пире ырӑ сунса яланах пулӑшса тӑнӑшӑн тав тӑватпӑр.

**Саламлаканӗсем: ывӑлӗпе хӗрӗ мӑшӑрӗсемпе, юратнӑ мӑнукӗсем, пиччӗшӗсемпе шӑллӗсен ҫемйисем, ҫывӑх тӑванӗсем.**



Юратнӑ мӑшӑра, аттене, асаттене, ырӑ кӑмӑллӑ тӑванӑмӑра – Муркашра пурӑнакан **Владислав Сергеевич Иванова** 60 ҫулхи юбилейпа ӑшшӑн саламлатпӑр.

Ҫирӗп сывлӑх, вӑрӑм та телейлӗ кун-ҫул, тулӑх пурнӑҫ сунатпӑр. Яланах хаваслӑ та ырӑ, чунупа ҫамрӑк пул. Кӗрекӳ тӑвансемпе пуян пултӑр, сӗтел ҫинчен ҫӑкӑр-тӑвар ан татӑлтӑр, чир-чӗр санран пӑрӑнса ҫӳретӗр. Ачусемпе мӑнукусен пархатарне курмалла пултӑр. Эпир сана юрататпӑр, санпа мухтанатпӑр, сан умӑнта ҫӗре ҫити пуҫ таятпӑр.

**Саламлаканӗсем: мӑшӑрӗ, хӗрӗ, ывӑлӗпе кинӗ, мӑнукӗсем, ҫывӑх тӑванӗсем.**

# Ыйтăвĕсем пурте пĕлтерĕшлисем

Канашлуран

***Сентябрĕн 23-мĕшĕнче ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем хăйсен черетлĕ канашлăвне пухăнчĕç. Малтанах вара вĕсем ветерансен районти канашĕн, старейшинăсен район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи канашĕн тата «Раççей пенсионерсен союзĕ» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн районти организацийĕн анлă ларăвĕн, кайран вара правăна пăснине асăрхаттаракан профилактика комиссийĕпе район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи право йĕркелĕхне тивĕçтерессин комиссийĕн пĕрлехи ларăвĕн ĕçне хутшăнчĕç.***

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов районти паянхи лару-тăрăва хак панă май çавна палăртрĕ. Ял хуçалăхĕнче йывăрлăхсем пур-ха. Хăш-пĕр хуçалăхсенче вырма ĕçĕсем те вĕçленеймен. Çумăрлă çанталăка пула çĕр улми пухса кĕртесси те уксахлать. Выльăх апатне вара кăçал ытлă-çитлĕ янтăласа хăварнă. Выльăхсене лайăх хĕл каçарса вĕсенчен продукци нумайрах илме пур майсем те çителĕклĕ. Вĕсене витесенче тытса усрама пуçăнма та вăхăт çитнĕ.

Промышленность продукцине туса кăларассинче, ытти енĕпе лайăх енсем çук мар. Çуртсене хутса ăшăтмалли тапхăр пуçăниччен шутлă кунсем юлаççĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнче Ватă çынсен кунне паллă тăватпăр. Çавна май ветерансен районти канашĕн председателĕ М.В. Виноградова ăна хатĕрленсе ирттерессин ыйтăвĕсене хускатрĕ.

Шел пулин те районта правăна тивĕçтересси кирлĕ шайра теме çук. Икĕ уйăх каялла Ярапайкасси ял тăрăхне кĕрекен Сыпайкассинче çĕрле вырăнти тата Шупашкартан килнĕ яшсем хушшинче пулса иртнĕ массăллă тӳпелешӳ те çавăн пирки калать. Унта çул çитмен çамрăксем пулни те паллă. Районти шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕ Е.И. Плечов пĕлтернĕ тăрăх ку йĕркесĕрлĕх пирки уголовлă ĕçсем пуçарма тивнĕ. Вăл культура учрежденийĕсен ĕç режимне кирлĕ пек йĕркелеме, талăкĕпех ĕçлекен апатлану предприятийĕсенче çĕрле эрех сутассине чарма сĕнчĕ. Халăх дружинисен, ашшĕ-амăшĕсен патрулĕн ĕçĕсене йĕркелени те ку тĕлĕшпе пысăк тĕкĕ.

Право йĕркелĕхне тивĕçтерессипе профилактика ĕçне йĕркеленĕ. Районти шалти ĕçсен пайĕн сотрудникĕсем кану кунĕсенче çĕрлехи вăхăтра культура учрежденийĕсем тăрăх рейдсене тухаççĕ. Çапах та тивĕçлĕ йĕрке тăвас тесен пурин те пĕрле çыхăнса ĕçлесе пыни кирлĕ.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсенчен чылайăшĕ полици участокĕсенчи уполномоченнăйĕсен ĕçĕпе кăмăлсăр. Вĕсем çирĕплетсе панă участоксенче вăхăтран вăхăта кăна пулкалаççĕ. Ку вара вăл 16 ял тăрăхĕ валли участковăйсен 10 пунктне кăна хăварнипе те çыхăннă. Евгений Иванович участковăйсене уйрăм кабинетсемпе, хальхи техника хатĕрĕсемпе тивĕçтерни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕ.

Ку тĕлĕшпе район администрацийĕн пуçлăхĕн Ю.А. Ивановăн сĕнĕвĕсемпе килĕшмесĕр тăма май çук. Вăл хăйĕн сăмахĕнче çавна палăртрĕ. Ял тăрăхĕсенче эрнесерен ирттерекен канашлусене участковăйсене чĕнессине практикăлас пулать. Участковăйсен пункчĕсене пур çĕрте те йĕркене кĕртсе çитермелле. Участковăйăн ĕç графикĕ, унпа çыхăнмалли телефон номерĕ курăнмалли вырăнта çакăнса тăччăр. Культура учрежденийĕсен хăйсен ĕç планĕсене участковăйсемпе килĕшсе йĕркелемелле. Культура учрежденийĕсене çĕрле мĕн вăхăтчен ĕçлеттерессине вырăнсенче хăйсен конкретлă татса памалла. Талăкĕпех ĕçлекен общественăлла апатлану предприятийĕсем тĕлĕшпе те çавнах каламалла. Ирĕклĕ халăх дружинисен, ашшĕ-амăшĕсен патрулĕсен ĕçĕ-хĕлĕ хальлĕхе курăнсах каймасть. Çул çитмен ачасем çĕрле клубсем тăрăх сулланса çӳрени йĕркеллĕ пулăм мар. Культура учрежденийĕсем хăйсен ĕçне ячĕшĕн мар, тĕллевлĕ туса пыни кирлĕ. Çĕрлехи вăхăтра учреждени тавраш ĕнче сутă сутассине йĕркелемелле, видеонаблюдени, хăрушлăх çыхăнăвĕн кнопкисем те пулмалла.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, йĕркелӳпе кадрсен, право енĕпе тивĕçтерессин тата вырăнти самоуправлени органĕсемпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕ Л.Ю. Тарасова РФ Федераллă Пухăвĕн Патшалăх Думин депутачĕсен тата ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕсене йĕркеллĕ ирттерессин ыйтăвĕсене хускатрĕ.

Правăна пăснине асăрхаттаракан профилактика комиссийĕпе район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи право йĕркелĕхне тивĕçтерессин комиссийĕн пĕрлехи ларăвне хутшăнакансем ял тăрăхĕсен территорийĕсенче профилактика кунĕсене ирттерни пĕлтерĕшлĕ пулнине палăртрĕç, малашне те кĕçнерни кунсенче ял тăрăхĕсенче тухса кун пек мероприятие йĕркелеме йышăнчĕç.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен канашлăвĕ савăнăçлă лару-тăруран пуçланчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов 7 çамрăк çемьене пурăнмалли çурт-йĕр туянма е харпăр хăйĕн уйрăм çуртне тума социаллă тӳлев илме май паракан свидетельствăсем пачĕ, ĕçре тăрăшуллисене, малашлăхшăн тăрăшакансене патшалăх енчен пулăшу яланах пулассине палăртрĕ.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ В.А. Калинин Федераллă саккунпа килĕшӳллĕн çĕр участокĕпе яланлăх усă курассин правине ăна арендăна илессин е сутăн илессин правине улăштарассин ыйтăвне уçăмлатса пачĕ.

«Ачаллă çемьесене патшалăх енчен пулăшу памалли хушма мерăсем çинчен» Федераллă саккуна пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе вырăнти самоуправлени органĕсемпе çыхăнса ĕçлесе пынин пĕлтерĕшĕ пысăк. РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕ Е.М. Александрова палăртнă тăрăх ача амăшĕн капиталĕпе усă курас ĕçсем 2009 çултанпах анлă сарăлнă. Елена Михайловна граждансем валли документсем хатĕрленĕ чухне ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен тимлĕрех те ответлăрах пулмаллине палăртрĕ.

Нумай ачаллă çемьесене çĕр участокĕ тӳлевсĕр уйăрса парас ыйтупа район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.Г. Никитин тухса каларĕ. «Чăваш Республикин «Чăваш Республикинче нумай ачаллă çемьесене çĕр лаптăкĕсем уйăрса парассин çинчен» Саккунне улшăнусем кĕртесси çинчен» Саккун йышăннă. Унпа килĕшӳллĕн муниципаллă районсен тата ял тăрăхĕсен муниципалитет харпăрлăхĕнче шутланакан çĕрсенчен нумай ачаллă çемьесене харпăрлăха тӳлевсĕр уйăрса паракан çĕр лаптăкĕсен чи пысăк виçисене çакăн пек палăртаççĕ: харпăр хăйĕн çуртне лартма – 0,15 гектар, дача тума – 0,15 гектар, хушма хуçалăх йĕркелеме – 1,0 гектар. Унччен вара ку лаптăксене 0,12 гектар, 0,10 гектар, 0,20 гектар палăртнă пулнă.

Çавăн пекех Владимир Германович çĕнĕ полигона йăла каяшĕсене турттарассипе ял çыннисемпе килĕшӳсем тăвасси пирки чарăнса тăчĕ. Çакă вăл тавралăх тирпей-илемĕшĕн кашнин ответлăхне ӳстерме тивĕç.

Канашлу итогĕсене пĕтĕмлетнĕ май район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов сӳтсе явнă кашни ыйтăвах пĕлтерĕшлĕ пулнине, вĕсене пурнăçлассипе ответлăха туймаллине палăртрĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Сентябрĕн 27-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери туризм кунĕ

# Курмалли, паллашмалли сахал мар

Пирĕн район Атăл юхан шывĕн çӳллĕ сылтăм çыранĕнче вырнаçнă. Кунта турист похочĕсемпе экскурсисем ирттерме, турист бизнесне йĕркелеме пур условисем те çитеççĕ. Районăн истори аваллăхĕ пуян, тĕрлĕ событисене халалланă аваллăх палăкĕсем, монументсем, музейсем тата чиркӳсем чылай.

Района 3 зонăна пайлама пулать: Ильинкăпа Сĕнтĕр, Тĕп тата Уйкас Янасал тăрăхĕсем. Вĕсен кашнийĕнех хăйне евĕрлĕхĕ, паллă енĕсем.

Пĕтĕм тĕнчери туризм кунне халалласа районта тĕрлĕ мероприятисем сахал мар иртрĕç. Кусем вĕсем сăн ӳкерчĕксен «Туристический калейдоскоп» конкурсĕ те, ачасен ӳкерчĕкĕсен «Вокруг света с рюкзаком» конкурсĕ те, шкул ачисен сăвăсемпе сочиненисен «Как я путешествовал» конкурсĕ те.

«Развитие туристических маршрутов в Моргаушском районе» темăпа çавра сĕтел пулса иртрĕ. Турист юхăмĕн ветеранĕсемпе тĕл пулусем пулчĕç. Çамрăк туристсем туризма пĕлӳ илессипе çыхăнтарса чăвашсен чи аслă юманĕ патĕнче, Б.И. Гузовский музейĕнче пулса курчĕç. Районти историпе краеведени музейĕнче И.А. Каргинăн сăн ӳкерчĕкĕсен выставки ĕçлет. Ял тăрăхĕсем хушшинчи Муркашри тĕп библиотекăра кĕнекесен «Моргаушский район – туристический край» выставкине йĕркеленĕ.

Техосмотр

# Çитес çултан – çĕнĕ йĕркесем

***РФ Транспорт министерстви автомобильсене обязательнăй йĕркепе техосмотр тăратмалли çĕнĕ правилăсене пичетлесе кăларнă. Документ официаллă майпа 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăя кĕрет.***

Çĕнĕ правилăсемпе килĕшӳллĕн транспорт хатĕрне аккредитациленĕ оператор тĕрĕслет. Операторпа автомобиль хуçи килĕшӳ тăваççĕ. Хыççăн автомобиль хуçи техосмотр ирттернĕшĕн тӳлет. Ăна диагностика картти параççĕ.

Кайран 5 минут хушшинче специалист автомашина документсенче кăтартнă даннăйсемпе пĕр килнине пăхса тухать. Пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулсан эксперт транспорт хатĕрне техосмотр тăратать те икĕ экземпляр диагностика карттине çырса тултарать: пĕри операторта юлать, теприне автомашина хуçине параççĕ. Кунсăр пуçне документри даннăйсене пĕрлехи автоматлă электронлă системăна кĕртеççĕ. Унта вĕсем 5 çул хушши упранаççĕ.

Техосмотр тăратнă чухне шинăсем епле шайра пулни те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та вĕсем юрăхлă мар пулсан çак процедурăччен маларах çĕннисемпе улăштарма тăрăшăр.

Çĕнĕ правилăсемпе техосмотр тăратмалли вăхăта татăклă палăртнă: 39 минут – бензинпа çӳрекен автомашинăсем валли, 43 минутран ытла мар – дизель топливипе е газпа çӳрекен автомашинăсем валли. Техосмотр тăратассин кун пек лимитне грузовиксем, прицепсем, мотороллерсемпе мотоциклсем валли те пăхса хунă.

Аса илтеретпĕр: уйрăм операторсен аккредитацине Автостраховщиксен Раççейри союзĕ ирттерет. Ку процедура ОСАГО-па çыхăнса тăмалла. Çапла вара «автогражданкăн» çĕнĕ полисне техосмотр тăман автомашинăсем валли памĕç.

Официаллă майпа техосмотр ирттерессин çĕнĕ правилисем 2012 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăя кĕреççĕ пулин те, тĕрĕслесе вĕсемпе 2012 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса кăна усă курма пуçăнĕç.

Суту-илӳ

# Кунта питĕ меллĕ



Пирĕн тĕллев – паян ĕнерхинчен, ыран вара паянхинчен лайăхрах пурăнасси. Ял халăхĕн пурнăçĕ кунран-кун çĕнелсе, илемленсе пыни куçкĕретех. Çакна паллах ниепле те хирĕçлеймĕн. Хăшĕ-пĕри çак тапхăра социализм вăхăтĕнчипе танлаштарсан самай чухăн пурăнатпăр тенипе вара пачах та килешес килмест. Ĕç условийĕсем те, пурнăç шайĕ те ӳссех пыраççĕ, пурнăç çине те ансатрах пăхатпăр мар-и-ха? Ĕçлекен çын нихăçан та выçă ларман тата япăх пурăнман. Çĕнĕрен те çĕнĕ çурт çĕкленет. Кантур пек хӳхĕм çуртсем ял хăтне кĕртеççĕ.

Ялти çыннăн пурнăçне çăмăллатас тесе Муркаш райповĕ те ырми-канми тăрăшать. Çитсе курар-ха Анаткас Турай енне. Енчен те Анаткас пĕр вĕçĕнче пурăнакансен малтан лавккана çитме çухрăм ытла утмалла пулнă пулсан халĕ ялта виçĕ çĕрте суту-илӳ точки уçнă. Кашни кун кирлĕ тавара туянма вара кăшт кăна тухса кĕмелле. Анаткасра усăллă апатлану çуртне илер-ха тата. Епле хӳхĕм кунта. Техĕмлĕ апат-çимĕçпе кирек хăш вăхăтра та кĕрсе сăйланма пулать. Ку çурт пысăках мар уявсем тума та питĕ меллĕ.

Халĕ чылай çĕрте магазинсене юсаса çĕнетеççĕ е çĕнĕрен çурт çĕклеççĕ, çапла майпа ял çыннисен ыйтăвне туллин тивĕçтереççĕ. Çакăн пек çĕнĕлĕхсем пире савăнтараççĕ.

Юлашкинчен вара Муркаш райпо канашĕн ертӳçине Борис Васильевич Андреева пысăк тав сăмахĕ калас килет. Татах та тăрăшса ĕçлеме Сирĕн иксĕлми вăй-хал пултăр. Çирĕп сывлăх та ăнăçу Сире.

**Анаткас ялĕнче пурăнакансем.**

Чăваш чĕлхин тасалăхĕ

# Тăван-хурăнташа тĕрĕс чĕнмелле

**(Малалли. Пуçл. 73 №).**

Маларах асăнтăм ĕнтĕ чăваш сăмахĕсемпе сайра усă куратпăр тесе, çавăнпа та тăван-хурăнташа тĕрĕс чĕнмелли терминсене илсе кăтартас килет.

Дедушка – асатте (ашшĕ енчен), мачак (тури чăвашсен); кукаçи, кукаçей (амăшĕ енчен); калаçура ватă арçынна мучи теççĕ.

Бабушка – асанне (ашшĕ енчен), мамак (тури); кукамай (амăшĕ енчен); ватă хĕрарăма – кинемей.

Дядя – мучи, тете (ашшĕн пиччĕшĕ); пичче, тете (ашшĕн шăллĕ); кукка (амăшĕн пиччĕшĕ, шăллĕ); хăвăн аçунтан аслăрах çынна мучи, тете теççĕ, кĕçĕнреххине – пичче, тете.

Брат – пичче, тете, шăллăм (кĕçĕнни).

Сестра – аппа (асли), йăмăк (кĕçĕнни).

Тетя – мăнакка, мăнаки, аслă аппа (ашшĕн е амăшĕн аппăшĕ); кĕçĕн аппа, аппа (ашшĕн е амăшĕн йăмăкĕ); ашшĕн пиччĕшĕн арăмĕ – кинемей, ашшĕн шăллĕн арăмĕ – инке; хăвăнтан аслăрах хĕрарăма инке тесе чĕнмелле.

Крестная мать – хреснанне, пысăк апи;

Крестный отец – хреснатте, пысăк атти.

Крестный сын – хĕресна ывăл.

Крестная дочь – хĕресна хĕр.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**

**Алексей ИВАНОВ,**
**ЧПУн журналистика факультечĕн студенчĕ.**

Ыйту-хурав

# Пенсисене финансласси пирки

**– Енчен те РФ гражданинĕ вăхăтлăх е яланлăх ытти çĕр-шыв территорийĕнче пурăнать пулсан вăл патшалăх пенсисене финансласси программине хутшăнма пултарать-и?**

– Çапла, эсир Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулсан чикĕ леш енче пурăнсан та Программăна хутшăнма пултаратăр. Çавна валли Программăна хутшăнасси пирки почтăпа нотариус е РФ консульство учрежденийĕн çынни çирĕплетнĕ заявлени ярса памалла. Заявлени бланкĕ Раççей Пенси фончĕн сайтĕнче пур (www.pfrf.ru).

**– Ĕçлемен пенсионерсем патшалăх пенсисене финанслассин программине хутшăнма пултараççĕ-и?**

– Çапла, пултараççĕ. Программăна хутшăнма кирек хăш ӳсĕмри граждансен те ирĕк пур. Вăл шутра обязательнăй пенси страхованийĕ енĕпе пенсин пухăнакан пайĕ çуккисен те (кунта 1953 çултан маларах çуралнă арçынсен тата 1957 çултан маларах çуралнă хĕрарăмсем кĕреççĕ). Ачасен 14 çултан тытăнса Программăна хутшăнас тесен Пенси фондĕнче регистрациленмелле тата обязательнăй пенси страхованийĕн свидетельствине илмелле.

Енчен те гражданин ĕç пенсийĕ илсе тăрать пулсан финанслассин йĕрки пĕтĕмĕшле йĕркепех пулать. Патшалăх вĕсен çулталăкри взносĕсене 2 пин тенкĕрен тытăнса 12 пин тенкĕ чухлĕ ӳстерсе парать.

**В. ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Объявление

**Аттестат № А 0986165, выданный Моргаушской средней школой в 1996 году, считать недействительным.**

Республикăри конкурсран

# Муркашсен «Кулибинĕсем» – пĕрремĕшсем

Чăваш Республикин ертÿçисем пĕр вырăнта ларма хăнăхман, патшалăх пулăшăвĕ çине çеç шанман çынсене аталану çулĕпе малалла кайма çул уçса пани тĕрлĕ мероприятисенчен курăнать. Акă иртнĕ çул республикăра пĕрремĕш хут килти условисенче тракторпа ытти ял хуçалăх техники ăсталакансене тупса палăртассипе «21 ĕмĕрти Кулибин» конкурс-выставка иртнĕччĕ. Нумай калаçтарчĕ вăл, чылай çĕнĕ шухăшсене çул пачĕ.

Ырă пуçару кăçал та вăйне çухатмарĕ. Авăн уйăхĕн 19–23-мĕшĕсенче Шупашкарта Машина тăвакансен кунĕ умĕн граждансем хăйсен килĕсенче ăсталанă трактор техникин «21 ĕмĕрти Кулибин» конкурс-выставки иртрĕ. Çак ырă проект «Трактор завочĕсем» концерн, Раççейри машинăсем тăвакансен пĕрлĕхĕ ертсе пынипе тата Чăваш Республикин Ял хуçалăх тата Экономика аталанăвĕн, промышленноçпа энергетика тата суту-илÿ министерствисем пулăшнипе пурнăçланчĕ.

Конкурс-выставкăна çак кунсенче ялти ăстасен маçтăрлăхне курма пиншер çын ситсе курчĕ. Жюри членĕсем конкурса йышлă явăçнисен шутĕнче Муркашсем те пулнине палăртрĕç. Çапла вара чи нумай «Кулибинсем» Муркаш тата Шупашкар районĕсенче пурăнаççĕ иккен. Шăпах вĕсем конкурс-выставкăна 5-шер ăстаçăна кăларма хевте çитернĕ-мĕн.

Сумлă конкурсра пирĕн районти Владислав Мефодьевич Димитриев (Шетмĕпуç ялĕ), Николай Васильевич Ермаков (Юнкă ялĕ), Валерий Прокопьевич Пигачев (Юнкă ялĕ), Владимир Станиславович Клопов (Калайкасси ялĕ), Анатолий Яковлевич Николаев (Кораккасси ялĕ) ăстаçăсем активлă хутшăнчĕç.

Жюри пĕтĕмлетĕвĕнче те пирĕннисен малтисен ретĕнче пулни Муркашсене савăнтарасса шанас килет. Çапла вара «Трактор техники» номинацире жюри членĕсем пĕр саслă пулса пĕрремĕш вырăна тата 15 пин тенкĕ укçан премие Анатолий Николаева панă. «Ял хуçалăх машинисемпе ĕç хатĕрĕсем» номинацире Николай Ермакова çитекенни пулман. Вăл та укçан 15 пин тенкĕ премие тивĕçнĕ. «21 ĕмĕрти Кулибин» конкурс-выставкăн асăннă номинацийĕнче Валерий Пигачев виççĕмĕш вырăн йышăнни те Муркашра паллă ăстасем пурринe çирĕплетет кăна.

Çĕнтерÿçĕсене саламланă май малашнехи ĕçре вĕсене пысăкрах пултарулăх ÿсĕмĕсем сĕнетпĕр.

**А. ПЕТРОВ.**

Специалистпа калаçатпăр

# Хĕле хатĕр пулмалла

***Вăхăт хăйĕннех тăвать. Ĕнер кăна сип-симĕс пулнă вăрман авăн уйăхĕ вĕçленнĕ май тĕрлĕ тĕслĕ сарăлчĕ, çулçă тăкма пуçларĕ. Кун каçа пĕрĕхсе тăракан сивĕ çумăр та хура кĕркунне çывхарнине систерет. Кунпа пĕрлех пĕрлешÿллĕ хуçалăхсенче ĕнер кăна улăх-çаранта кĕтÿре çÿренĕ выльăхсене витере тытас тапхăр алăкран шаккать. Çак кунсенче район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертÿçи А. БЕЛОВ район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕпе Т. А. АЛЕКСЕЕВĂПА тĕл пулса калаçнă.***

**– Татьяна Александровна, чăн малтанах çакна пĕлес килет: кăçал хĕле районти пĕрлешÿллĕ хуçалăхсенче миçе пуç мăйракаллă шултра выльăх, сысна кĕрет?**

– Сирĕн шухăшăрпа тата ыйтăвăрпа килĕшетĕп, мĕншĕн тесен фермăсене хĕле хатĕрлесси çинчен калаçма пуçласан çак ыйту малтанах выльăхсене те пырса тивни пирки час-часах манатпăр. Вырăнсенче ку тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттеретпĕр. Ахальлĕн майĕ те çук. Кĕрkуннехи-хĕллехи тапхăр выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче чи ответли шутланать. Çак вăхăтра ыранхи кунпа пурăнакансем фермăсене те, выльăхсене те тухăçлă хĕл каçарма хатĕрлесе çитереççĕ. Ку чухне зооветеринари правилисене пăхăнмасан выльăхсен тĕрлĕ чирĕсене çул уçăласси, продуктивлăх чакасси пирки те иккĕленÿ çук. Выльăхсене çарантан сарайне кĕртнĕ вăхăтра таврари температура улшăнни уйрăмах çамрăк выльăхсемшĕн сиенлĕ пулма пултарать. Çакна шута илсе асăннă тапхăрта фермăсенчи хуçалăх ĕçсене туса ирттернĕ хушăрах планлă зооветеринари ĕçĕсене пурнăçламасăр хăварма юрамасть.

Авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне хуçалăхсенчен тăратнă статистика пĕтĕмлетĕвĕпе кăçал хĕл каçма выльăхсем пĕлтĕрхинчен сахалрах кĕреççĕ. Тĕслĕхрен, мăйракаллă шултра выльăхсен хисепĕ çулталăк хушшинче 5248 пуçран 4909 юлнă. Çак çухатура куллен укçа паракан ĕнесен йышĕ пысăкланни ырă шанчăк çуратать: вĕсен кĕтĕвĕ пĕлтĕр 2100 пуç пулнă пулсан, кăçал – 2137 пуç. Кунта иртнĕ çултанпа «Передовик» (22 пуç), «Восток» (20 пуç), «Герой» (16 пуç) малалла утăмлани савăнтарать. Сыснасен кĕтĕвĕ уйăх пуçланнă тĕле 7343 пуçчĕ. Ку вăл çулталăк каяллахинчен сахалрах.

**– Планлă зооветеринари ĕçĕсем терĕр те мĕн шута хуратăр эсир çакăнта?**

– Ĕнесене хĕллехи тапхăрта тытма фермăсене юсанипе-шуратнипе-дезинфекцилинипе пĕрлех çак вăхăтчен вĕсене çĕпĕр язвинчен, ЭмКАРтан, нăрăран вакцинăлани, туберкулезран тата бруцеллезпа лейкозран тĕрĕслени хĕл кунĕсенче сывă выльăх продукчĕсемпе усă курма май парать. Кунта сире выльăх тухтăрĕсемпе калаçма сĕнетĕп. Вĕсен канашĕсем пĕрлешÿллĕ хуçалăхсен обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсемшĕн те, ял хуçалăх специалисчĕсемшĕн килти хушма хуçалăх тытса пыракансемшĕн те вырăнлăрах пуласса шанатăп.

**– Умра сивĕ кунсем тăнине курса хăш-пĕр хуçалăхсем выльăхсене витесене те куçарчĕç пулĕ?**

– Выльăх-чĕрлĕх пăхас технологие пăхăнакансем чăнах та кĕтÿри ĕнесене витесене куçарчĕç. Кунта манăн паян «Восток», «Герой», «Передовик», Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăхсемпе «Ударники» Йÿçкассинчи сĕт фермине палăртса хăварас килет.

Ĕнесемпе тынашкасене витене кĕртнĕ май вĕсене тăрантарасси те хĕллехи рацион çине куçать. Çак вăхăта «Восток», «Оринино», «Свобода», «Ударник», Суворов ячĕпе тата Чкалов ячĕпе хисепленекен хуçалăхсен выльăхсене силос пама пуçларĕç. Çавăн пекех «Оринино», «Свобода» хуçалăхсем ĕнесене сахăр кăшманĕн каяшне (патока) парассине йĕркелерĕç.

**– Ĕнесене хĕллехи тапхăра кĕртнĕ май вĕсен чĕрнисене касасси те иккĕмĕш пĕлтерĕшлĕ ĕç мар...**

– Иртнĕ кунсенче выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци пулăшнипе Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ ĕне выльăхсен чĕрнисене касма пуçларĕ. Каламалла, чĕрне ÿссе кайни ĕнен продуктивлăхне чакарать. Çавăнпа та чĕрне касассине çулталăкне икĕ хут йĕркелени хуçалăхсене продуктивлăха тивĕçлĕ шайра тытма пулăшать.

**– Татьяна Александровна, калаçăва хутшăннăшăн, ĕне выльăхсене хĕле хатĕрлесе мĕнле ĕçсем туса ирттернине ăнлантарнăшăн пысăк тав.**

– Хăвăра тавта пуç. Калаçăвăмăра вĕçлесе вара манăн ял çыннисене кĕркуннехи пасарта ветеринари справки е свидетельствисĕр выльăхсене сутма-илме тăхтама сĕнес килет. Кун пек чух района лейкозлă ĕнесем килсе кĕрес хăрушлăх пур. Эпĕ халĕ каланине ял çыннисем тĕрĕс ăнланасса шанатăп.

# Ыранхи ăнăçу паян никĕсленет

Пирĕн рейд

Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвне пурнăçласа ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисене хĕле хатĕрленине тĕрĕслес ĕç çак эрнере вĕçленчĕ. Тĕрĕслевĕн юлашки кунĕнче эпир Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнче, А. Афанасьевăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче, «Фаворит» чикĕллĕ яваплăхлă обществăра пулса куртăмăр. Вырăнсенче ĕçлекенсем çитес хĕл кунĕсем пирки шутлани кашни фермăрах куç умне тухса пычĕ. Ытларах çĕрте обществăлла выльăх-чĕрлĕх фермисенче ăратлă выльăх ĕрчетекен «Свобода» ял хуçалăх производство кооперативĕ-заводри пек чечексемпе пахча çимĕç йăранĕсем вырăнне çум курăк ашкăрса ÿсни кăна кăмăла хуçрĕ.



МАЛАШЛĂХА ПĂХАÇÇĔ

– Хамăр çитменлĕхсене куратпăр, вĕсене пĕтерме ума тĕллевсем лартатпăр. Кашмашсен ырă тĕслĕхне хамăр патăмăрта аталантарасси – умри çывăх задача. Ăна пурнăçлама пирĕн пур условисем те çитеççĕ, – терĕ ферма умĕнчи чечексен йăранĕ патĕнчен витери тислĕк кăларакансем патне утса иртнĕ май Анаткассинчи сĕт фермин заведующийĕ В. Николаев.

Асăннă хуçалăхра хĕл кунĕсене çанă таварсах хатĕрленни тĕрĕслев вăхăтĕнче куç умне туллин тухрĕ. Çу каçа фермăри юсав ĕçĕсене пурнăçланипе пĕрлех сарайсене дезинфекциленĕ, шуратса хăт кĕртнĕ.

Ыранхи кунпа пурăнаканăн вара хĕле туллин хатĕрленессипе те ĕçсем васкаварлă вĕçленмеççĕ. Эпир пынă кун уй-хир бригадин 8 çынран тăракан ушкăнĕ пăрусем тăмалли сарайĕнчен алăпа тислĕк кăларассипе вăй хуратчĕ. Вĕсемпе ĕçлекен Александр Архипов тракторист та ĕç ăнăçулăхĕшĕн тăрăшать. «Хамăр хуçалăх ăнăçăвĕ пĕрлехи тимлĕхрен пуçланнине ăнланатпăр. Çавăнпа сивĕ кунсем килсе çитиччен хĕле хатĕрлесе ытларах ĕçсем пурнăçлама тăрăшатпăр. Пĕр ĕç тепринпе тачă çыхăнса пынине, эпир паян ĕçлени хĕл кунĕсенче производствăна çÿллĕ шайра тытма пулăшнине ăнланатпăр. Çу кунĕсенче выльăхсем валли апатне çителĕклĕ янтăларăмăр теççĕ те малашлăх пирки те ырă шухăшсем çуралаççĕ», – терĕ ĕçленĕ вăхăтрах Светлана Ильинична Яковлева **(иккĕмĕш сăн ÿкерчĕкре)**. Унпа пĕрле ĕçлекен Людмила Алексеевна Михайловăпа Эльвира Геннадьевна Николаева та **(пĕрремĕш сăн ÿкерчĕкре)** ĕçрен уйрăлмасăр ĕçтешĕн сăмахĕсемпе килĕшсе калаçрĕç:

– Пĕр шухăш-ĕмĕтпе ĕçлесен ăнăçу пулатех. Çакна ăнланатпăр.

КĂТАРТУСЕМ НАЧАР МАР

Суворов яч. хис. хуçалăхăн ĕне ферминчен Анаткассинчи сысна фермине куçсассăн та кунти ĕçченсем тирпейлĕхе малти шайра тытни иккĕмĕш вырăна юлмарĕ. Юсанă, дезинфекцилесе шуратнă сысна витисемпе иртнĕ чух ферма ертÿçи Наталья Николаевна Архипова хуçалăх кăçал ăратлă выльăх нумай сутнипе, ферма ĕçченĕсем çителĕклĕ пулнипе, хĕл каçма выльăх апачĕ ытлă-çитлĕ янтăланипе кăмăллăн паллаштарса пычĕ.

Ферма ĕçченĕсем кăмăллă пулни вĕсен ĕç кăтартăвĕсенче те палăрать. Ĕне сăвакансем сĕт сăвассине кăçалхи сакăр уйăхра иртнĕ çулхинчен 0,5 процент ÿстернĕ (895,4 тонна сĕт сунă), пĕр ĕне пуçне тивекен вăтам сăвăма 4213 килограма çитернĕ. Танлаштарма: районăн вăтам кăтартăвĕ – 2757 килограмм.

Самăртма хупнă выльăхсем те ферма ĕçченĕсем вăй хунине кура продукци параççĕ. Сакăр уйăх хушшинче талăксерен вăтамран 590 грамм ÿт хушнă мăйракаллă шултра выльăхсемпе 388 грамм ÿт хушнă сыснасем хуçалăх экономикине самай малалла утăмлаттарнă. Сăмах май ку кăтартусем районăн вăтам виçинчен пысăкрах.

Паян Анаткассисен хĕле хатĕр фермисенче 473 пуç мăйракаллă шултра выльăх (вăл шутран 200 ĕне), 1516 пуç сысна.

Александр Афанасьевăн Чемейĕнчи хресчен (фермер) хуçалăхĕнче те сысна ферми хăйĕн юсавлăхĕпе, апат çителĕклипе çитес хĕл кунĕсене шанчăклă пăхать.

Ярославкăра унчченхи «Сеятель» хуçалăхăн ĕне фермисем юлашки вăхăтченех пушă ларнăччĕ. Сергей Валерьевич Григорьев предприниматель «Фаворит» чикĕллĕ яваплăхлă общество йĕркелесен пушă сарайсене чун кĕнĕ. Предприниматель ишĕлме пуçланă сарайсене юсаса кунта хур-кăвакал ĕрчетессине çул панă.

– Республикăра тата унăн тулашĕнче хур-кăвакал ĕрчетекенсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашатăп та эпир пурнăçлама пултарайманни нимех те çук пек туйăнать. Ĕçлекенсем те, тухăçлă вăй хума кăмăлĕсем те пур. Çавăнпа та ÿсĕмсен çулĕсем пурăна-киле пире те парăнасса шанатпăр, – терĕ ытти чух хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕ пирки калаçма юратман предприниматель.

ХĂРУШСĂРЛĂХ

Фермăсенче пулнă чух хĕл валли выльăх апачĕ янтăланипе, тислĕк кăларнипе, сарайсене шуратни-дезинфекцилинипе паллашнипе пĕрлех пушар



хăрушсăрлăх ыйтăвĕ те малти вырăнта пулчĕ. Çичĕ хут тар юхтарса ĕçленине сарайсенче огнетушительсемпе хăйăр кунисем, çулăмпа кĕрешмелли пирвайхи хатĕрсем, пушарпа кĕрешме шыв илмелли вырăнсем пулманни, юсавсăр электрохуçалăх «ĕçлени» самантрах кĕл тума пултарнине пурнăçра час-часах куратпăр. Анчах практикăра çакна ăнланни пур чухне те курăнса каймасть. Çак кун пушар хăрушсăрлăхĕпе Суворов яч. хис. хуçалăхри фермăсене пысăк ыйтусемех пулмарĕç пулсан ыттисен ку енĕпе тимлĕрех пулмалли курăнчĕ.

**Рейд бригади:**
**Т. АЛЕКСЕЕВА,**
**ял хуçалăх пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ;**
**А. КАЗАКОВА,**
**выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станцири ветлабораттори пуçлăхĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ;**
**К. ПОПОВ,**
**патшалăх пушар надзор пайĕн инспекторĕ;**
**А. БЕЛОВ,**
**район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертÿçи.**

# Кросра – ачасем те, ветерансем те

Иртнĕ вырсарни кун Муркашри стадиона çын чылай пухăнчĕ. Олимп чемпионкин Валентина Егоровăн парнисене çĕнсе илессишĕн ирттернĕ ăмăрту шкул ачисене старта йыхравларĕ. Унпа пĕрлех иртнĕ «Наци кросĕ – 2011» чупăва ача садне çӳрекенсенчен пуçласа тивĕçлĕ канăва тухнисем таранах хутшăнчĕç.

Кăçал Муркашсем «Наци кросне» кĕртнĕ çĕнĕлĕх хăйне тӳрре кăларчĕ: стадионта ăмăрту пуçланиччен чылай малтан ача-пăчан хаваслă кулли илтĕнчĕ, выляса чупни курăнчĕ. Ăмăртăвăн ятарлă футболкисене тăхăнсан вĕсем те «спортсменсем» пулнине пĕлтерчĕç. Пĕчĕккисем ăмăртнине вара куракансем ытти стартсенчен ытларах кĕтрĕç. Шăпăрлансене стадионта çул кăтартса пыма тĕнче89 класлă спорт маçтăрне Нина Охотниковăна шанчĕç. 250 метрлă дистанцие ачасем çăмăллăнах парăнтарчĕç.

Милена Иванова («Солнышко» ача сачĕ), Катя Смирнова («Колокольчик») тата Ирина Смирнова («Путене») – çак хастар хĕр ачасем çĕнтерӳçĕсен картлашки çине хăпарма тивĕçрĕç. Арçын ачасенчен Богдан Яриков (Кашмаш), Никита Волков тата Павел Макаров (иккĕшĕ те Муркашран) мала тухрĕç.

Пĕчĕккисем хыççăн шкулта вĕренекенсем тĕрлĕ ӳсĕмсенче ăмăртрĕç. Ăмăртăва хутшăнма Етĕрне районĕнчен те, Туçи Çармăс районĕнчен те килсе çитнĕччĕ.

1999 çулта çуралнисен тата кĕçĕнрехисен ӳсĕмĕнче шăпах Туçи Çармăс районĕнчи Дмитрий Макаровпа Муркашри вăтам шкулта вĕренекен Екатерина Мясникова пĕрремĕш вырăна тухрĕç.

1997–1998 çулсенче çуралнисен чупăвĕнче те хăнасем палăрчĕç. Çĕнтерӳçĕ ятне кӳршĕ республикăри Кирилл Поствайкин тата Шетмĕпуçĕнчи тĕп шкулта вĕренекен Павел Никоноров, Атапайри тĕп шкулта вĕренекен Татьяна Блиновăпа Ярапайкассинчи вăтам шкулти Диана Чернова тивĕçрĕç.

1995–1996 çулсенче çуралнисен чупăвĕнчи çĕнтерӳçĕсем Йӳçкассинчи вăтам шкулти Петр Семеновпа Ярапайкассинчи вăтам шкулти Светлана Соколова пулчĕç.

Спорт тата сывă пурнăç йĕрки




Ăмăртура ертӳçĕсемпе вĕсен çумĕсем те хăйсене тĕрĕслерĕç. Район администрацийĕн пуçлăхĕпе Ю.А. Ивановпа пĕрле Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн председателĕн çумĕ В.П. Мидуков та Муркаш стадионĕнчи дистанцие парăнтарчĕ.

Ăмăртăва килсе çитнĕ тĕнче рекордсменки Вера Соколова вара Нина Охотниковăпа пĕрле старта ĕç коллективĕсен представителĕсемпе тухрĕç. Ку чупусенче Никита Николаевпа Дина Замятина («Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă пĕрлешĕвĕн командинчен) иккĕшĕ те мала тухса хăйсен командине кубокпа тивĕçтерме пултарчĕç. Хыççăнхи вырăнсенче – Шалти ĕçсен министерствин Муркаш тăрăхĕнчи уйрăмĕпе «Свобода» хуçалăхăн команди.

Çакăн пек сумлă ăмăрту, паллах, ветерансемсĕр пулма та пултараймасть. Тивĕçлĕ канăва тухнисем те маттур: Вениамин Васильевич Федоровпа Тамара Зиновьевна Александрова мала тухса çакна çирĕплетрĕç кăна.

Сывă пурнăç йĕркине тытса пыма çакăн пек массăллă стартсем те хистеççĕ, тĕслĕх кăтартаççĕ. «Хальхи вăхăтра обществăра спортпа туслă, сывă пурнăç йĕркине тытса пыракансем кирлĕ. Вĕсене ытларах хакласçĕ, вĕсем ăнăçлăрах, пурнăçра та тĕрĕс çул тупаççĕ». Çак шухăша район пуçлăхĕ И.В. Николаев та, район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрикин ертӳçи Н.Г. Ванеркин та палăртрĕç. Çакна пурнăç та кăтартса парать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Н. Охотниковăпа В. Соколова пулас чемпионсемпе.**




**Продаю бревна, б/у. Недорого. Тел.: 8-906-134-82-14. Зоя.**

* * *

**Çиччĕ пăрулану хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-905-199-23-44.**

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики информирует население района об утверждении границ охранной зоны линейно-кабельного сооружения ВОЛС ОАО «МегаФон» «г.Чебоксары - с.Аликово» в границах Моргаушского района ЧР

Постановление Главы администрации Моргаушского района от 01.06.2011 г. № 493.

Рассмотрев ходатайство ОАО «МегаФон» об утверждении границ охранной зоны линейно-кабельного сооружения ВОЛС ОАО «МегаФон» «г.Чебоксары - с. Аликово», акт предварительного выбора земельного участка, утвержденный постановлением администрации Моргаушского района № 911 от 23.11.2010 г., схему размещения границ охранной зоны, подготовленную ООО «Земстрой», на основании постановления Правительства Российской Федерации от 09.06.1995 г. № 578 «Об утверждении Правил охраны линий и сооружений связи Российской Федерации», ч.6 ст.15 Федерального закона от 24.07.2007 г. № 221-ФЗ «О государственном кадастре недвижимости», п.5 ст. 31 Земельного кодекса РФ от 25.10.2001 г. №136-ФЗ, администрация Моргаушского района Чувашской Республики постановляет:

1. Утвердить схему расположения границ зоны с особыми условиями использования - охранной зоны линейно-кабельного сооружения ВОЛС ОАО «МегаФон» «г. Чебоксары-с. Аликово» на территории Моргаушского района Чувашской Республики.

2. Наложить на земельные участки общей площадью 18225 кв.м., расположенные полностью или частично в границах зоны с особыми условиями использования - охранной зоны линейно-кабельного сооружения ВОЛС ОАО «МегаФон» «г. Чебоксары-с. Аликово» на территории Моргаушского района Чувашской Республики ограничения, предусмотренные постановление Правительства Российской Федерации от 09.06.1995г. №578 «Об утверждении Правил охраны линий и сооружений связи Российской Федерации».

3. Опубликовать настоящее постановление в районной газете «Çĕнтерӳ ялавĕ».

**Глава администрации района**
**Ю.А. ИВАНОВ.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 1-5.**

**Продаю МЕТРОВЫЕ ДУБОВЫЕ ДРОВА 1 куб. м. – 1000 руб. Доставка по району. Тел.: 63-0-39, 8-908-307-07-44. Николай.**

**Я, собственник земельной доли Чернова Елена Алексеевна, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли общей площадью 1,38 га, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Сеятель» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярославского сельского поселения, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:130102.**




## Прогноз погоды

| | среда 28 сентября | | | | четверг 29 сентября | | | | пятница 30 сентября | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +5 | +7 | +10 | +8 | +7 | +8 | +11 | +7 | +6 | +7 | +9 | +6 |
| Давление мм | 745 | 745 | 744 | 741 | 740 | 741 | 742 | 743 | 745 | 747 | 747 | 745 |
| Влажность % | 91 | 88 | 81 | 97 | 98 | 93 | 69 | 91 | 95 | 82 | 56 | 76 |
| Ветер | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | С-В | С | С | С | С-В | С | З | Ю-З |
| м/сек | 2 | 2 | 3 | 1 | 1 | 4 | 5 | 3 | 2 | 3 | 3 | 4 |
| Солнце восход/заход | | 06:53 | 18:32 | | | 06:55 | 18:30 | | | 06:57 | 18:27 | |
| Луна восход/заход | | 08:16 | 18:18 | | | 09:50 | 18:41 | | | 11:23 | 19:10 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 1-5.**

**Требуется специалист по дизайну, знание ПК.**
**Тел.: 8-903-345-75-76. 2-3.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку, овец.**
**Тел.: 8-905-342-39-43. 10-10.**

**30 СЕНТЯБРЯ с 8-00 до 16-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи Ульяновской, Беларусской фабрик и других российских производителей.**

**ЗАО «Марийский завод силикатного кирпича» предлагает ЛУЧШЕЕ РЕШЕНИЕ ДЛЯ ЗАСТРОЙЩИКА**
**- КИРПИЧ СИЛИКАТНЫЙ БЕЛЫЙ, ЦВЕТНОЙ, РЕЛЬЕФНЫЙ, КОЛОТЫЙ**
**- ГАЗОСИЛИКАТНЫЕ БЛОКИ**
**- СМЕСИ СУХИЕ СТРОИТЕЛЬНЫЕ «СИЛма»**
**- ПОЛИМЕР-МИНЕРАЛЬНАЯ ФАСАДНАЯ КРАСКА**
**- ИЗВЕСТОСОДЕРЖАЩЕЕ ВЯЖУЩЕЕ**
**- МУКА ИЗВЕСТНЯКОВАЯ**
**- ПЕСОК КВАРЦЕВЫЙ**
**АКЦИЯ!!! (До 15 октября 2011 года.) Кирпич силикатный от 4 рублей за штуку.**
**АДРЕС: РМЭ, МЕДВЕДЕВСКИЙ РАЙОН, П. СИЛИКАТНЫЙ, УЛ. МИРА 1.**
**Тел.: 8(8362)53-67-34 ОТДЕЛ СБЫТА.**
**Тел.: 8(8362)53-68-54 ПРИЕМНАЯ.**
**ПРЕДСТАВИТЕЛЬСТВО: РМЭ, г. ЙОШКАР-ОЛА, ул. ЛЬВА ТОЛСТОГО, 45, ОФ.3.**
**Тел.: 8(8362)46-99-98.**
**САЙТ: WWW.ZAO-MZSK.RU**
**Электронный адрес: kirpich2004@pochta.ru**

**В связи с открытием АЗС (611 км. автодороги М-7 «Волга»)**
**Объявляет конкурс на следующие вакансии:**
**1. Операторы АЗС, жен., от 20 до 45 лет, образование выше среднего, хорошее знание ПК, приятная внешность, грамотная речь;**
**2. Заправщики АЗС, муж., жен.;**
**3. Специалисты по обеспечению порядка, муж., желательно отслужившие в армии;**
**4. Технический персонал: дворники, уборщица, слесарь.**
**Ждем Вас на строящемся объекте 12 октября 2011 года с 12.00 ч. до 14.00 ч., пожалуйста, захватите с собой, в свободно написанной форме, автобиографию.**
**Справки по тел. в г.Казани 8 (843) 255-33-00 (доб.210), отдел кадров.**

Администрация Моргаушского района выражает глубокое соболезнование родным и близким Мостовой И.В., ведущего специалиста-эксперта отдела организационно-кадрового, правового обеспечения и по работе с органами местного самоуправления администрации района, по поводу трагической гибели
**брата ПАРАНДЕЕВА Станислава Владимировича,**
**невестки ПАРАНДЕЕВОЙ Натальи Валерьевны,**
**племянницы ПАРАНДЕЕВОЙ Анны Станиславовны**.

Москакассинчи «Колокольчик» ача сачĕн коллективĕ кĕçĕн ушкăна çӳренĕ
**Анна Станиславовна**
**ПАРАНДЕЕВА**
сарăмсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата тăванĕсемпе, çывăх çыннисемпе пĕрле чун-чĕререн хурланса пĕлтерет.

Коллективы судебных участков № 1 и № 2 Моргаушского района Чувашской Республики выражают искреннее соболезнование специалисту-эксперту Толикиной В.А. в связи с кончиной
**МАТЕРИ**.

Сосновкăри тĕп шкул коллективĕ, ку тăрăхри ачасемпе ашшĕ-амăшĕсем, пĕрле ĕçленĕ ĕçтешĕсем чылай çул кунта чăваш чĕлхипе литература учителĕнче вăй хунă З.А. Ильинан юратнă мăшăрĕ, Етĕрнери 25 номерлĕ профессипе техника училищин директорĕнче ĕçленĕ
**Афанасий Ильич**
**ИЛЬИН**
чылай вăхăт чирленĕ хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çывăх çыннисемпе, мĕн пур тăванĕпе чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Чăваш Республикин сывлăха сыхлас ĕç тата социаллă аталану министерствин Муркаш районĕн халăха социаллă хӳтлĕх паракан пайĕ тата социаллă пулăшу центрĕ кунта ĕçлекен тĕп бухгалтерăн ашшĕ
**Юрий Андреевич**
**СЕМЕНОВ**
вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**
**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальносçен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальносçен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене параканасем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Волкова А.И.
Пичете панă 27.09.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4357.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.